ХЫПАР
175-176 №№ • 2010, авăн, 11

КУЛЬТУРА

• *Ас тăвăм*

Юлашки могикан

1967 çулхи авăн уйăхĕнче Чăваш АССР Министрсен Канашĕ çумĕнче йĕркеленнĕ радиопа телекурав хорĕнче хăй вăхăтĕнче Чăваш халăх артисчĕсем Александр Ильин, Иван Христофоров, Александр Орлов, Тамара Гурьевăпа Зоя Лисицына, тава тивĕçлĕ вун-вун артистпа ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ юрланă.

Раççейĕпе чапа тухнă капеллăра ĕçленĕ тата паян та вăй хуракан 150 ытла артистран чи малтанах Куславкка районĕнчи Мушар ялĕнче çуралса ӳснĕ А.М.Орлов /1935-2009/ ятне асăнас килет. Александр Михайлович ятарлă музыка пĕлĕвĕ илмен, иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсемчен вăл вокал, капелла е сольфеджио сăмахсем мĕне пĕлтернине те ăнланман. Апла пулин те лăпкă Энĕшпе аслă Атăл юхан шывĕсен хутлăхĕнче ӳссе çитĕннĕ, вăйлă та илемлĕ, çепĕç те уçă саслă Александр Орлов çур ĕмĕре яхăн каялла артист пулса тăрать.

Кинерти тулли мар вăтам шкула пĕтернĕ хыççăн Мушар каччи Сĕнтĕрвăрринчи 15-мĕш профтехучилищĕре механизатора вĕреннĕ. Унтан виçĕ çул хĕсметре пулнă хыççăн Шупашкарти «Чăвашстрой» пĕрлешӳре экскаваторщикра ĕçленĕ. Çак вăхăтра юлташĕсем сĕннипе вăл строительство организацийĕнчи профсоюз комитечĕ тата хула ĕçтăвкомĕн культура пайĕ йĕркеленĕ концертсене, халăх уявĕсемпе фестивальсене хутшăннă. Унăн лирикăлла тенор сассине, паллах, профессионал артистсемпе искусствоведсем, композиторсемпе пултарулăх коллективĕсен ертӳçисем те итлеме пултарнă.

Пĕррехинче хулари культура паркĕнче уяв концерчĕ вĕçленсен А.Орлов патне Чăваш АССР халăх артисчĕ М.Денисов пынă, ăна мухтаса алă парса саламланă та унăн пурнăçĕпе кăсăкланнă. Александрăн нимĕнле ятарлă пĕлӳ те çуккине пĕлсен Саратоври Собинов ячĕллĕ консерваторие

пĕтернĕ юрăç питĕ тĕлĕннĕ.

– Санăн кăçалах Шупашкарти музыка училищине вĕренме кĕме тăрăшмалла. Унта манăн арăм преподавательте ĕçлет, çамрăксене вокал ăсталăхне ӳстерме пулăшать. Паянах Зоя Федоровнăна сирĕн пултарулăх çинчен калăп... – тенĕ Мефодий Иванович.

Шел те, «Чăвашстрой» пĕрлешĕвĕн механизаторĕ, хăй тĕллĕн вĕреннĕ ытарайми çепĕç саслă юрăç училищĕре вĕренме килĕшмен. Мĕншĕн тесен çемьеллĕ, ачаллă, хваттер илме черет çывхарса пынă.

1965 çулхи кĕркунне Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕ вокалистсен конкурсне иртнернĕ. Унта А.Орлов та хутшăннă. Конкурсра Александр Ф.Васильев композитор А.Алка сăввисемпе хайланă «Вăрманта куккук авăтать» тата А.Орлов-Шуçăм илемлетнĕ «И, çил вĕрет» юрăсене пысăк хавхаланупа шăрантарнă. Çавăн хыççăн конкурс членĕсем пурте пĕр саслă пулса часах 30 çул тултаракан механизатор-юрăçа чăн-чăн артист пулма пилленĕ. Юрăпа ташă ансамблĕнче ĕçленĕ вăхăтра Александр чи малтанах нотăсене вĕреннĕ, музыка инструменчĕсемпе калама хăнăхнă.

А.Орлов ансамбль концерчĕсене хаваспах хутшăннă, куракансем унăн юррисене яланах тăвăллăн алă çупса йышăннă. Анчах та Александр кунта икĕ çул ĕçлесе те лайăх ташлама вĕренеймен. Çавăнпа вăл 1967 çулхи авăн уйăхĕнче чăвашсен паллă композиторĕ тата дирижерĕ Аристарх Орлов-Шуçăм тин çеç йĕркеленĕ радиопа телекурав хорне /1992 çултанпа Чăваш патшалăх академи капелли/ ĕçлеме куçать.

Çак коллективра Александр Михайлович шăп хĕрĕх çул юрларĕ. Унăн çепĕç, чуна тыткăнлакан уçă сассине Совет Союзĕнчи вун-вун регионти, çавăн пекех Венгрири, Польшăри, Чехири искусствăпа культурăна юратакансем хаваспа итленĕ. Вĕсенчен хăшĕсем Александр Орлова итальянсен мухтавлă тенорĕн Лучано Паваротти сассипе танлаштаратчĕç.

15-20 çул каялла кăна-ха Чăваш патшалăх академи капеллин концерчĕсене чи малтан Чăваш халăх артисчĕсен, икĕ Александрăн – Ильинпа Орловăн – юррисем илемлететчĕç. Шел те, иккĕшĕ те вĕсем йывăр чире пула пирĕнтен иртерех уйрăлса кайрĕç. Пĕлтĕрхи хура кĕркунне яланлăхах куç хупнă А.М.Орлов капеллăн пуян историйĕнче юлашки могикан пек тăрса юлать. Паян Александр Михайлович хăй пурнăçĕн чи пысăк пайне халалланă коллективра «ЧР халăх артисчĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ пĕр çын та çук...

■ **Петр СИДОРОВ**